# Шавли С. Çăлтăрсем хушшинчи Çăлтăр

Чăваш литературине пысăк хурлăх килсе çапрĕ. Тăван культурăн, тăван поэзин вăйпитти юманĕ тӳнсе кайрĕ, чăваш поэчĕсен патриархĕ пиртен уйăрăлса кайрĕ.

Вăл, чăваш ялĕнче çуралса ӳснĕ чухăн хресчен ачи, Октябрь революцийĕн малтанхи çулĕсенче Шупашкара çăпатапа килсе кĕрет те, пурăна-киле, çынпа поэзи çине пĕтĕм тĕнче культурин çӳллĕшĕнчен пăхма вĕренсе çитет.

Халиччен пĕр чăваш поэчĕ те тăван чĕлхене ун пек лайăх пĕлсе çитейменччĕ-ха. Хусанкай чăннипех те тăван чĕлхен аслă шкулĕ, удаверситечĕ пулса тăчĕ. Пĕр чăваш поэчĕ те хăй пурăннă чухне ун пек чăплă пулайман-ха. Хăюллăн калатăп эпĕ, Хусанкая пĕлмен чă-ваш çукчĕ.

Çăмăл мар пулчĕ ăна сăвă йĕркипе пурăнма, анчах та вăл пирĕн пĕрремĕш сăвăç-профессионал пулса тăчĕ. Чăваш сăввин ĕçне-хĕл-не вăл патшалăх ĕçĕн картне лартрĕ.

Пĕлĕтри çăлтăрсем çĕре çутатаççĕ. Çĕр çинчи çăлтăрсем ăс-тăна çутатаççĕ, чун-чĕрене ăшăтса тăраççĕ. Хусанкай çавăн пек çăлтăр пулнă. Ун çути нумай çул хушши чăваш ăс-тăнне çутатса тăрĕ, чун-чăрене ăшăт са тăрĕ.

Поэт больница кровачĕ çине пырса выртиччченех ура çинче пулчĕ - сăвăсем çырчĕ, халăх умĕнче каларĕ, докладсем турĕ, çывăхри-аякри çул-йĕре çӳрерĕ.

Поэт вилсессĕн те вилмест - сăвви-поэми юлать, сасси юлать. Иванов, Çеçпĕл, Хусанкай - тăван поэзири чи çутă ятсем. Халь пурăнакан поэтсем пурте вĕсен орбити тавра çаврăнаççĕ-ха.

Ват юмантан ĕмĕрех пулса çитнĕ сарă икел шакăр! тăкăнать, çамрăк хунав кашласа, сарăлса ӳсме тытăнать. Чăваш çĕрĕ çинче Хусанкай сăввисем янăранă чух чăвашăн илемлĕ чĕлхи яланах çепĕççĕн илтĕнсе тăрĕ, чăваш сăвăçисем çуралса ӳссе пырĕç.

Поэтăн 63 çулне эпир больница палатинчех январĕн 22-мĕшĕнче палăртрăмăр, эпĕ «Кĕнеке» сăвă çырса пытăм. Поэт пурăнать, халĕ ĕнтĕ вăл халăх хушшинче кĕнеке пулса утать...

Чăвашра килтен киле
Кĕнеке кĕрсе çӳрет.
Ĕмĕрсен чĕлхипеле
Халăхран ыйтать-тĕпчет:
– Ятăр-шывăра эсир
манман-и?
– Астăватпăр-ха,
манман, тăванăм! -
Халăх евитлет.
Чăвашра килтен киле
Кĕнеке кĕрсе çӳрет.

Трибунсен чĕлхипеле
Халăхран ыйтать-тĕпчет:
–Халăх - вăй, çавна
эсир манман-и?
–Ăнкартатпăр-ха
кăштах, тăванăм! –
Халăх евитлет.
Чăвашра килтен киле
Кĕнеке кĕрсе çӳрет.
Поэтсен чĕлхипеле
Халăхран ыйтать-тĕпчет:
– Юррăр-сăввăра
эсир упратри?
– Хуп хушшине тек
хупмастпăр!–
Халăх евитлет.
Чăвашра килтен киле
Кĕнеке кĕрсе çӳрет.
Халăхпуç чĕлхипеле
Халăхран ыйтать-тĕпчет:
–Янĕ чакмĕ-и
тăван  сăмахăн?
–Чакмĕ, тусăм! -
сас каять вăраххăн,
Инçетрен килет.
Кăмăлĕ çырлахрĕ
Кĕнекен,
Çул хĕрринчи чул çине ларать.
Вăл пухать те çĕкленет хуллен,
Кăштăр-кăштăр малалла утать.
Вăл Истори. Еррипен пырать.
Пĕтĕмпех çырать вăл скрижале.
Утнă майăн туйине сулать,
Пур çĕре те унăн çитмелле.

*Коммунизм ялавĕ. - 1970. - 6 март.*